Н.И.Ашмарин хăйĕн «Чăваш сăмахĕсен кĕнеки» ятлă чаплă ĕçĕнче пухса, упраса хăварнă сăмахсем халăх педагогикине тĕпчесе вĕренмелли тĕп çăлкуç пулса тăрать. Унта халăх ăспарăвĕн ятарлă сăмахĕсем, педагогикăн тĕп ăнлавĕсемпе меслечĕсем, мелĕ-ăслайĕ, ачасене тĕрĕс ÿстермелли ĕç тĕсĕсем, ача çуратассипе, пăхса ÿстерессипе çыхăннă йăла-мешехе, ача-пăча, яш-кĕрĕм йышĕнчи хутшăнусем, çамрăксен уявĕсем т.ыт.те, т.ур.те ÿкерĕнсе юлнă.

Г.Н.Волков,
Раççей Вĕренÿ академийĕн академикĕ.

## Петĕр Хусанкай

### Thesaurus linquae Tschuvaschorum

Н.И.Ашмарина асăнса

Чиновниксем, ним вырăнне хумасăр,
Пире куçран хăртса виртленĕ чух,
«Час сирĕн чĕлхĕре те тĕп тăватпăр!» –
Тесе чĕремĕре витернĕ чух
Вĕреннĕ вырăс пур усал вăя
Мухтавлă ырă ĕçĕпе питленĕ:
Чăваш чĕлхи илемлĕ те пуян, –
Thesaurus linquae Tschuvaschorum,-тенĕ.
Çапла ят хунă латинла вăл хăйĕн
***Чăваш сăмахĕсен кĕнекинĕ.***
Çав кĕнеке – ун пурăнăçĕ, вăйĕ,
Вăл каçрĕ пур патшалăх чиккине.
Çапла чун кÿртнĕ тĕттĕм тĕрмере
Раççейĕн çутă ăсĕсем пире.

1953.

Н.И.Ашмарин

# МАНĂН ПУРНĂÇ

**1928 çулхи пуш уйăхĕнче Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ РСФСР правительствине Н.И. Ашмарина ятарлă пенси пама ыйтса çыру янă пулнă. Ун çумне Николай Иванович çырнă автобиографие хушса панă /унăн вырăсла ячĕ – «Мое жизнеописание»/. Тĕпчевçĕ пурнăçне унăн харпăр ăнланăвĕн виçипе çырса кăтартнă çак паха документ 1995 çулта М.Р.Федотов профессорăн «Н.И.Ашмарин. Краткий очерк жизни и деятельности» кĕнекинче /тиражĕ – 1.000 экз./ кун курнă. Чăвашла пирвайхи хут пичетленет.**



●Николай Ашмарин /сылтăмри/ тата унăн пиччĕшĕ Василий.

x x x

Эпĕ 1870 çулта Хусан кĕпĕрниччи Етĕрне хулинче çуралнă[1]. Манăн асатте Владимир кĕпĕрниччи хресчен, крепостной пулнăскер. Анне Чĕмпĕр кĕпĕрниччи Кăрмăш уесĕнче Казачья ятлă слободара хысна хресченĕн килйышĕнче çуралнă. Эпĕ çуралнă хыççăн часах манăн атте-анне Кăрмăш хулине куçнă, кукамай çуртĕнче пурăнма тытăннă. Çавăнпа та эпĕ Кăрмăша хамăн тăван йăва тесе шутлатăп.

Манăн атте пит вĕреннĕ çынах пулман - вăл уес училищи кăна пĕтернĕ, анчах çамрăкла мĕн вĕреннине питĕ аван астăватчĕ. Анне килĕнче вĕренкелесе пĕлÿ илнĕ, ун чухнехи модăна уяса кăштах музыкăпа та айкашнă, вырăс çыравçисен кĕнекисене вулама юратнă. Вăл хăй аллипе Некрасов сăввисене тетрачĕ-тетрачĕпе куçарса çырнă, вĕсене эпĕ халĕ те упратăп.

Атте хăйĕн ачисене ăраснарах пурнăç çулĕ çине кăларма тахçанах ĕмĕтленнĕ пулмалла. Аслă пичче хула училищине пĕтерсен, атте ăна Чулхулари гимназие янăччĕ, анчах пичче çамрăклах вилчĕ. Ун хыççăн эпĕ те пирĕнтен чи сывăх çав гимназие вĕренме кĕтĕм.

Чĕлхесене тишкерес туртăм манăн ача чухнех палăрма пуçланă, пуринчен ытла чăваш чĕлхи кăсăклантаратчĕ. Сăлтавĕ кĕретех: Сăр леш енчен Кăрмăша чăвашсем йышлăн килетчĕç, эпĕ куллен хутшăнса пурăнакан вырăс хресченĕсем хушшинче вĕсем хăйсен çи-пуçĕпе уйрăмах палăрса тăратчĕç. Анчах мана вĕсен чĕлхине вĕрентекен çын тупăнмарĕ, чăвашла пичетленĕ кĕнекесем пулни çинчен вара эпĕ вуçех те пĕлмен. Çапла вара мехел пулманран манăн вăхăтлăха чăвашсем çинчен манма тиврĕ. Анчах кăшт каярах эпĕ каллех чăваш чĕлхипе кăсăкланса кайрăм [2].

Гимназие кĕме хатĕрленнĕ чухне манăн француз чĕлхине вĕренме тиврĕ. Эпĕ Margot çырнă кĕнекене



● Етĕрнери Спас чиркĕвĕ. Кунта Николай Ашмарина шыва кĕртсе ят панă.

тишкереттĕм - вăл ун чухне чи лайăххи шутланнă, пурте унпа вĕреннĕ. Вĕрентекенĕ - чиркӳ псаломщикĕ Алипий Яковлевич /хушаматне астумастăп/ - француз сăмахĕсене питĕ пăсса калатчĕ. Сăмахран, француз чĕлхинче сăмсапа ĕнерсе калакан хăйне евĕрлĕ усă сасăсем пурри çинчен эпĕ ăнсăртран, пачах урăх çынран пĕлтĕм. Анчах псаломщик мана француз чĕлхипе самаях кăсăклантарса ячĕ. Унăн пиччĕшĕ, тĕн академийĕнче вĕренекенскер, теменле ыйтупа тĕпчев ĕçĕ çырнă, çавна май унăн французла кĕнекесем нумай вулама тивнĕ. Вара француз чĕлхине чиперех вĕренсе çитнĕ иккен. Çав псаломщиках мана француз чĕлхин пысăк грамматикине панăччĕ /йăнăшмастăп пулсан, Носов çырнăскерне/. Унта правилăсене икĕ чĕлхепе - вырăсла тата французла юнашарах çырса панăччĕ. Çак грамматикăна та, ун çумне хушса панă хрестоматие те эпĕ тĕпĕ-йĕрĕпе вуласа тухрăм.

Француз чĕлхине хам тĕллĕн пикенсе тишкернине пула эпĕ каярахпа, гимназире чухне, ку предметпа хамăн класри нумай юлташсенчен, «пĕрремĕш» шутра тăраканнисенчен те, ăнăçлăрах вĕренсе пыраттăм. Шел пулин те, таврари майсăр пурнăç-тăрмăш мана чĕлхе пĕлĕвĕ енĕпе ӳсĕмлĕн утма май памастчĕ. Эпĕ авалхи чĕлхесемпе, уйрăмах латин чĕлхипе питĕ кăсăкланаттăм, ăна эпĕ ĕмĕр тăршшĕпех юратса тишкертĕм. Анчах ман алла ку чĕлхесемпе чăн ăслăлăх шайĕнчи пĕр кĕнеке те, авалхи çыравçăсен тексчĕсене ăнлантаракан пĕр ĕç те кĕмерĕ. Тен, çавăнпах пулĕ, эпĕ авалхи грек тата латин чĕлхисене тишкерес енне сулăнмарăм. Вĕсем вара питĕ илемлĕ те янравлă, çавăнпа та сăмахлăхпа кăсăкланакан çамрăка çăмăллăнах илĕртсе кайма пултарнă. Вара эпĕ вунвиççĕрех, гимнази тенкелĕ çинче ларнă чухне, суйласа илнĕ чĕлхесенчен уйрăлса кайнă пулăттăм.

Чăваш чĕлхи çинчен мана пач ăнсăртран тенĕ пек аса илме тӳр килчĕ. Гимназин аслă класĕсенче вĕреннĕ Василий пичче пĕррехинче Хусантан Добролюбов çырнă «Чăваш чĕлхин фонетикине» тата Православи тĕнне саракан Общество чăвашла кăларнă Иоанн Евангелине çырăнса илнĕччĕ. «Фонетикăра» вырăс саспаллийĕсемпе çырнă чăваш тексчĕсене тишкерни пурччĕ. Ку мелпе Н.И.Золотницкий хăйĕн ĕçĕсенче анлăн усă куратчĕ, чăваш сăмахĕсен чăн янăравĕ ун пек çырнипе питĕ хытă пăсăлатчĕ. Кĕнекери грамматика материалĕ питĕ иксĕкчĕ, чĕлхе пулăмĕсене туллин мар, йăнăш ăнлантарни нумайччĕ. Ку чĕлхе тытăмĕ пачах хăйне майлă пулни мана малтанах чылай йывăрлăх кӳчĕ. Кунти пулăмсем хам унччен вĕреннĕ чĕлхесенчи пек марччĕ. Ăнланма йывăр кĕнекене темиçе хутчен те алăран ятăм, анчах вăл каллех мана хăй патне туртрĕ, вара эпĕ мĕнле пулсан та пĕр лартнă тĕллеве çитме шут тытрăм. Ăса кĕменнине ăнлантарма пĕлекен çын çукчĕ, вăхăт‘иртнĕçем ыйтусем хăй майĕпе усăласса шанмалли çеç юлнăччĕ. Ку вăхăт часах çитмерĕ. Евангели тексчĕсенчи сăмах формисемпе пуплев йĕркине ăнланса илесси уйрăмах йывăрччĕ. Евангелире чăваш сăмахĕсене темĕнле хăйне евĕрлĕ, эпĕ пĕлмен саспаллисемпе çырни мана хытă тĕлĕнтерчĕ. Тепĕр темиçе çултан, чăвашла кĕнекесене çăмăллăнах вулама хăнăхса çитсен тин эпĕ чăваш алфавитне хайлакансем хăш-пĕр паллăсене серб çырулăхĕнчен илнине пĕлтĕм. Малтанах эпĕ Евангелие чăваш чĕлхин теменле уйрăм, Н.И.Золотницкий çырса кăтартман калаçăвĕ çине куçарнă тесе шутлаттăм. Анчах кайран, каникула Кăрмăша таврăннă тапхăрсенче, унта пырса çӳрекен чăвашсемпе калаçкаласа, эпĕ çакна ăнлантăм: Золотницкий чăваш сăмахĕсене тĕрĕс мар çырать, тĕн саракансем усă куракан саспаллисем вара чăваш пуплевне тĕрĕсрех палăртаççĕ [3].

Мана ĕçлеме чăваш словарĕ çукки нумай кансĕрлетчĕ. Золотницкий словарьне эпĕ чылай вăхăтран çеç, пач ăнсăртран туянтăм. Ку кĕнеке мана питĕ савăнтарса ячĕ, нумай-нумай чăваш сăмахне пĕлме май пачĕ. Чăн та ĕнтĕ, савăнни нумая пымарĕ, эпĕ унта чылай сăмаха пăсса çырнине курса пăшăрхантăм. Анчах тĕн саракансен кĕнекисене вулани, чăвашсем калаçнине тимлесе итлени словарьти йăнăшсене тӳрлетме, унăн çитменлĕхĕсен витĕмне сирме май пачĕ. Астăватăп, кĕнеке çумне хушса панă хăш-пĕр этнографи очеркĕсене эпĕ малтанах ăслăлăхăн чи пысăк çитĕнĕвĕ вырăнне хурса, каçса кайса вулаттăмччĕ. Унта чăваш сăмахĕсене ытти нумай чĕлхесен сăмахĕсемпе танлаштарни, тĕрлĕрен ăслăлăх тĕпчевĕсене асăнни çине-çинех тĕл пулатчĕ. Каярахпа эпĕ çакна ăнлантăм: Золотницкий чăваш чĕлхине тата хĕвелтухăç чĕлхисене тĕплĕнех пĕлмен, çавăнпа та, тимлĕрех тĕпчесен, унăн танлаштарăвĕсем чылайăшĕ йăнăш пулни кĕретех курăнать. Апла пулин те, унăн ĕçĕсем маншăн усăллă пулчĕç: вĕсем мана тухăçри чĕлхесем çинчен çырнă ĕçсемпе паллашма пулăшрĕç, Хусан тутарĕсен чĕлхине тĕпчеме кирлине кăтартрĕç. Çак чĕлхе пĕлтерĕшĕ чăваш чĕлхине тĕпчес ĕçре мĕн тери пысăк пулнине эпĕ каярахпа çеç ăнланса илтĕм. Çавнашкалах кунта çармăс, ирçе-мăкшă тата ар /удмурт/ чĕлхисем те кирли курăнчĕ, мĕншĕн тесен вĕсем нумай енчен чăваш чĕлхипе тачă çыхăннă.

Хусан тутарĕсен чĕлхи çинчен мана пуçласа Золотницкий танлаштарăвĕсенчен пĕлме тӳр килчĕ. Унтан эпĕ Н.И.Ильминский Христос тĕнне кĕнĕ тутарсем валли вырăс саспаллийĕсемпе çапса кăларнă кĕнекесене вулама тытăнтăм. Хăш-пĕр кĕнекесене эпĕ Чулхулара кивĕ кĕнеке сутуçисенчен туянаттăм, теприсене Хусанта пулнă чухне илеттĕм. Çав куçарусене вулани мана çав тери пысăк пулăшу пачĕ: эпĕ нумай-нумай тутар сăмахĕсене ăса хыврăм, ансат та хиврелетсе пăсман тутар пуплевĕпе паллашрăм, тутар сăмахĕсене тĕрĕс калама вĕрентĕм. Араб çырăвĕпе çапса кăларнă кивĕ тутар кĕнекисем тăрăх вара сăмахсене епле каламаллине ниепле те пĕлме çук. Каярахпа, Хусана пурăнма куçсан, эпĕ тутар чĕлхине кĕнекесем тăрăх та, тутарсемпе калаçса та тĕплĕнрех вĕренме пуçларăм. Вара эпĕ тутарсен ун чухнехи ула-чăла çырулăх чĕлхинче чăн-чăн халăх пуплевĕн пулăмĕсене ют чĕлхесенчен йышлăн кĕрсе тулнисенчен çăмăллăнах уйăракан пултăм. Кунсăр пуçне крешĕн тутарсен чĕлхине мусульман тĕнне тытакан Хусан тутарĕсен чĕлхипе танлаштарни мана сасă тытăмĕпе, морфологипе тата сăмах йышĕпе те самаях уйрăлса тăракан тутар калаçăвĕсем пуррине кăтартрĕ. Хусанти тĕпчевçĕсем ун чухне вĕсене тишкерме тимлесех каймастчĕç курăнать.

Тухăç чĕлхисене, пайăррăн илсен, араб, перс тата осман-туркка чĕлхисене эпĕ гимназире чухнех хам тĕллĕн вĕренме пуçларăм. Çавăн чухнех эпĕ Чулхулара пурăнакан мишер-тутарсен пуплевĕпе те паллашнăччĕ, вĕсемпе сăмах перкелешсе илме те пултараттăмччĕ. Мишерле калаçма мана хутла аван пĕлекен ача, чухăн сутуçă ывăлĕ вĕрентетчĕ. Шел, ку вĕренӳ вăраха пымарĕ.

Гимназие пĕтернĕ хыççăн эпĕ Тухăçри чĕлхесен Лазарев институтне вĕренме кĕтĕм. Унта вĕрентекен предметсенчен мана пуринчен ытла осман-туркка чĕлхи

кăсăклантаратчĕ, мĕншĕн тесен вăл чăваш чĕлхипе хурăнташлă, эпĕ вара ун чухнех чăваш чĕлхине тĕпчес ĕçе хамăн пĕтĕм вăя пама шут тытнăччĕ. Мана осман çыравçисен хайлавĕсем кăсăклантарман, ун пек ятарлă предмет Институтра пулман та. Эпĕ туркка чĕлхине, чи малтан калаçу-пуплев чĕлхине тимлеттĕм. Çак тĕллевпе осман çыравçисен драма произведенийĕсене тата, тупма май килсен, французларан турккăлла куçарнă романсене вулаттăм.

Институтăн пĕрремĕш курсĕнче вĕреннĕ чухне эпĕ чăваш этнографийĕпе хамăн пĕрремĕш тĕпчев ĕçне çырнăччĕ /вырăсла ячĕ «Очерк народной поэзии у чуваш»/, ăна çийĕнчех «Этнографи тишкерĕвĕ» /"Этнографическое обозроение"/ журналта пичетлесе кăларчĕç. Ку статьяра тишкернĕ халăх юррисене Пăва чăвашĕ Ив.Никол. Юркин пухнă, Мускаври Çут çанталăк пĕлĕвĕ, антропологи тата этнографи обществи ăна мана пăхса тухма панăччĕ. Çак юрă пуххине вуланăçемĕн ман куç умне хăйне майлă сăмах ăсталăхĕн асамлăн туйăнакан тĕнчи тухса тăчĕ. Хăйĕн тулашĕпе те, кăмăл-туйăмĕпе те вăл эпĕ унччен пĕлнĕ халăх сăмахлăхĕн тĕслĕхĕсенчен çав тери ăрасначчĕ. Çавăнпа пĕрлех ку юрăсене вуланă май эпĕ чăваш чĕлхине питĕ сахал пĕлни куçкĕретех курăнчĕ. Эпĕ вуланă кĕнекесенчи материал чăваш чĕлхин морфологи, синтаксис тата сăмах пуянлăхне туллин уçса параймасть иккен.

Институтăн юлашки курсĕнче вĕреннĕ чух эпĕ чăваш чĕлхин фонетикине тата морфологине çырса кăтартас тĕллевпе материал пухма тытăнтăм. Эпĕ хатĕрленĕ чăваш грамматикин малтанхи алçырăвне халĕ вилнĕ В.Ф.Миллера пăхма патăм. Вăл манăн ĕçри пысăк çитменлĕхсене уçса кăтартрĕ. Института пĕтернĕ хыççăн, 1894 çулта Хусана пурăнма куçсан эпĕ алçырăва юсама пикентĕм. Кунта грамматикăна нумай çĕнĕ материал хушăнтарма май килчĕ. Тĕслĕхсене эпĕ чăвашсене ыйтса пĕлсе те, чăваш алçырăвĕсене вуласа та пухаттăм. Çав алçырусене мана халĕ вилнĕ Федор Никифорович Никифоров панăччĕ. Вăл ун чухне Хусанти учитель семинарийĕ çумĕнчи шкулта вĕрентетчĕ, каярах çав семинари наставникĕ пулнăччĕ. Чылай юсарăм пулин те, грамматика тытăмĕ тăп-тăп чăмăртансах çитеймерĕ, çитменлĕхсене пĕтĕмпех пĕтерейменрĕм, мĕншĕн тесен манăн ăслăлăх тишкерĕвĕн хăнăхăвĕ пачах пулман, ку ĕçе пĕлекен ăста ертсе пыман. Епле пулсан та, Хусан университечĕн профессорĕ М.Ф.Катанов, эпĕ ăна хамăн ĕçе кăтартсан, çапла каларĕ: вăл манăн грамматикăна пичетлени усăллă пулĕ тесе шутлать, çавăнпа та «Ăслăлăх çырăвĕсене» кĕртме сĕнӳ тăрататать. Çапла ĕнтĕ, эпĕ чăваш чĕлхине тĕпчесе çырнă пĕрремĕш ĕçĕн шăпи питĕ телейлĕ пулчĕ. Венгр академикĕ Б.Мункачи çак ĕç пичетленсе тухнă хыççăн Н.Ф.Катанов патне янă çырура ăна wichtig /"питĕ аван"/ тесе хакланă.

1902 çулта манăн «Пăлхарсем тата чăвашсем» /"Болгары и чуваши"/ ятлă ĕçĕм пичетленсе тухрĕ. Унта эпĕ чăвашсемпе Атăл пăлхарĕсем хушшинчи çыхăнусене çутатса пама пултаракан тĕслĕхсене кĕскен тишкерсе тухнă. Уйрăммăн илсен, Березин тата ытти тĕпчевçĕсем илсе кăтартнă пăлхар çырăвĕн палăкĕсене çĕнĕлле вулама пикенсе пăхрăм. Унччен вĕсене е пачах вулайман, е, ман шутăмпа, тĕрĕс мар вуланă пулнă. Ку ĕçе тĕрлĕ çĕршывсенчи ăслăлăх çыннисем ырласа йышăннă, Венгри Академийĕн членĕ Б.Мункачи вара, унта каланă шухăшсене тишкерсе, пысăк статья çырнă, вăл «Etnographia» журналта пичетленсе тухнă. Ку тĕпчеве малалла туса пырса, эпĕ «Хусанти Архиерей пахчинчи мусульман масар чулĕ çинчен» /"Об одном мусульманском могильном камне на Архиерейской даче в Казани"/ ятлă статья çыртăм, çавăн пекех финн чĕлхисен тĕпчевçи И.Миккола «Пăлхар ханĕсен ят йĕрки» /"Именник болгарских ханов"/ пирки çырнă статьяна хакласа рецензи пичетлерĕм.

1896 çултах эпĕ чăваш сăмахĕсен словарьне пухса хатĕрлеме тытăннăччĕ. Çак тĕллевпе эпĕ вăл вăхăта пичетленсе тухнă мĕн пур чăваш кĕнекисене тата чăвашсем çинчен çырнă ĕçсене пăхса тухрăм, вĕсенчен кирлĕ тĕслĕхсем çыра-çыра илтĕм. Унтан И.Я.Яковлев, Ф.Н.Никифоров тата ытти çынсем мана панă чăваш алçырăвĕсене вулама пикентĕм. Ку алçырусене ялти шкулсенче вĕрентекенсем, Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕренекенсем тата ытти хăш-пĕр çынсем пухса хатĕрленĕ, унта халăх сăмахлăхĕн пысăк пуянлăхĕ - сăвви-юрри, юмах-халап питĕ нумай, уйрăм сăмах тата ытарлă пуплерĕш пурччĕ. Вĕсене пурне те словаре кĕртрĕм. Кунсăр пуçне эпĕ хам та чăваш сăмахĕсене, халăх пултарулăхĕн хайлавĕсене пухнă, çак тĕллевпе Ĕлхӳ кĕпĕрнинчи Пелепей уесĕнче, Шупашкар уесĕнчи Тĕрлемес ялĕнче, Чикме уесĕнчи Шăпачав, Туçи Олкаш, Лап Олкаш, Мăн Хураçка, Пошкăрт, Кăрмăш уесĕнчи Турхан, Мисчĕ, Чартакан ялĕсенче тата ытти çĕрте те пулнă. Мана çак çынсем чăваш сăмахĕсемпе пуплерĕшĕсем уйрăмах нумай пухса пачĕç: Петр Вас. Васильев, К.С.Сергеев, Ив.Кар. Токмаков, Петр Ив. Орлов, Виктор Никифор. Орлов, Ив.Никол. Юркин, Вас.Никиф. Никифоров, Мих.Петр.Петров, Илья Ефим. Ефимов, Алекс, Вас. Рекеев, М.В.Шевле, Григ.Тим.Тимофеев, А.П.Милли т.ыт., вĕсен ячĕсене словаре кăларнă чухне кăтартăпăр.

Хусанта пурăннă чухне чăвашсемпе курнăçса-хутшăнса эпĕ уйрăмах нумай сăмах пухрăм. Словаре вăрçăччен пичетлеме пуçланăччĕ, анчах «А» саспаллин икĕ кăларăмĕ çеç /320 стр./ тухса ĕлкĕрчĕ. Хальхи вăхăтра, Автономиллĕ Чăваш Республикин Çутĕç Халăх Комиссариачĕ пуçарнипе, каллех словаре пичетлеме тытăннă. Анчах, материал калăпăшне кура, пĕтĕм словаре пичетлесе кăларма темиçе çул кирлĕ пулать.

Чăваш словарьне çырса хатĕрлеме кайнă материалпа эпĕ чăваш чĕлхин синтаксис йĕркине тĕпчеме те усă курнă. «Чăваш синтаксисне тĕпчесе пăхни» /"Опыт исследования чувашского синтаксиса"/ ĕçĕн пĕрремĕш пайĕ 1903 çулта, иккĕмĕшĕ 1923 çулта пичетленсе тухнă. Синтаксис пулăмĕсене тĕплĕн тишкернĕ май эпĕ чăваш чĕлхинче те, унпа хурăнташлă ытти чĕлхесенче те çын шухăш-кăмăлĕ - психологи питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине асăрхарăм. Ку таранччен вăл пулăма уяман пек туйăнать мана. Унсăр пуçне çакă палăрчĕ: вырăнти тĕрлĕ калаçусенче синтаксис йĕрки чылай уйрăлса тăрать, çав уйрăмлăхсене малашне çеç тĕплĕн çырса кăтартма тата ăнлантарса пама май килĕ.

Юлашки çулсенче, 1914 çултан пуçласа, ерçӳллĕ вăхăтра эпĕ тĕрĕк тата финн чĕлхисен тĕпчевçисем ку таранччен пачах пырса тĕкĕнмен пулăма - Вăтам Атăлçи чĕлхисенче - чăваш, Хусан-тутар, çармăс /мари/, ар /удмурт/ тата ирçе-мăкшă чĕлхисенче анлă саралнă еверлев сăмахĕсене тĕпчеме тытăнтăм. Танлаштарса пăхма эпĕ хам пĕлекен ытти чĕлхесенчен те тĕслĕхсем илетĕп. Еверлев сăмахĕсен уйрăмлăхĕсене эпĕ иртнĕ ĕмĕр вĕçĕнчех сăнама тытăнсаччĕ. Çак çĕнĕ тĕпчев пĕтĕмлетĕвĕсене эпĕ «Вăтам Атăлçи чĕлхисенчи еверлев» /"Подражание в языках Среднего Поволжья"/ ятлă ĕçре çырса кăтартнă, унăн пĕрремĕш пайĕ «Азербайджан патшалăх университечĕн хыпарĕсенче» пичетленсе тухнă ĕнтĕ. Ленинград тюркологĕ Н.К.Дмитриев ку ĕçе тĕрĕк еверлевĕсене тĕпчесе çырнă пĕрремĕш ĕç тесе хакларĕ ĕнтĕ. Унăн «Туркка еверлевĕсене тĕпчени» /"Beitrage zur osmanischen Mimologie"/ ятлă статйи «Венăри тухăç тĕпчевĕсен журналĕнче» пичетленсе тухмалла. Кун çинчен вăл хăйĕн «Лакăрти сăмах пулăвĕ» ятлă статйинче пĕлтерет /"СССР Ăслăлăх Академийĕн Доклачĕсем" журналăн 1926 çулхи сентябрь-октябрь номерĕнче пичетленсе тухнă/. Ман ĕçĕн ку таранччен пичетленсе тухнă пайĕнче еверлев сăмахĕсене пулăвĕ тăрăх ушкăнласа тухнă, ку тĕлĕшпе вĕсен тĕрлĕ тĕсĕсене туллин çырса кăтартнă. Тепĕр пайне журнал редакцийĕ кăçалхи кĕркунне пичетлеме пăхнă. Кунта еверлевсен тĕп тĕсĕсене /вĕсем пурĕ аллă çиччĕ шутланаççĕ/ тишкерсе тухнă; вĕсенчен кашнинех тивĕçлĕ сасă ĕлкипе палăртса тухнă. Кашни ĕлки пĕлтерĕшĕпе уйрăлса тăракан, анчах пĕр пек пайсенчен тăракан, пĕр.



● Н.И.Ашмарин Шупашкарта. 1930 çулсен пуçламăшĕ.

пек йĕркеленекен евĕрлевсен ушкăнне пĕрлештерет. Ĕçĕн юлашки пайĕнче эпĕ Вăтам Атăлçи чĕлхисенчи евĕрлевсенчи сасăсен пĕлтерĕш сĕмĕсене пăхса тухатăп.

1923-26 çулсенче, Азерб. патш. университечĕн профессорĕнче ĕçленĕ чухне, эпĕ азеди калаçăвне тĕпчеме тытăнтăм, çавăн пекех Азербайджанри тĕрĕк калаçăвĕсен словарьне пухассине йĕркелеме вăй хутăм. Çак тĕллевпе эпĕ «Азербайджанри тĕрĕк калаçăвĕсен словарĕ валли материал хатĕрлемелли инструкци тата программа» çыртăм /хам Бакуран тухса кайиччен ку программа тăрăх 12500 яхăн карточка çырнăччĕ/. Асăннă калаçусене тишкерсе, «Нуха хулинчи тĕрĕк халăх калаçăвĕсене пĕтĕмĕшле тишкерни» /»Общий обзор народных тюркских говоров г.Нухи»/ ятлă кĕнеке çыртăм, ăна Азербайджан тĕпчев-тишкерӳ обществи 1926 çулта пичетлесе кăларчĕ.

Хальхи вăхăтра, Хусана таврăннă хыççăн, эпĕ каллех хамăн тĕп ĕçе - чăваш чĕлхине тĕпчес, словарь çырса хатĕрлес, чăваш студентсене чăваш чĕлхипе лекцисем вулас ĕçе /Чĕмпĕрте ку ĕç чарăнса ларнăччĕ/ пуçăнтăм. Кăçал вĕсем ман патра чăваш чĕлхин ăслăлăх синтаксисĕпе лекцисем итлерĕç. Вĕсенче эпĕ халиччен пичетленсе тухнă ĕçсене кĕме ĕлкĕреймен çĕнĕ тĕпчевсен пĕтĕмлетĕвĕсемпе усă куратăп. Пĕрремĕш пусăмри, уйрăмах вара иккĕмĕш пусăмри шкулсенче тăван чĕлхе вĕрентме чăваш грамматика терминологийĕ питĕ кирлине шута илсе, ытти ĕçсемпе пĕрлех, терминсем тума та вăй хуратăп.

Вăтăр çул хушши ытла манăн пĕтĕм ĕçĕм-хĕлĕм халăх çутĕçĕнчен, ăслăлăх тĕпчевĕнчен уйрăлмасть, чăваш халăхĕн чĕлхипе иртнĕ кун-çулне, унăн ăс-хакăл еткерне тĕпчесси унта тĕп вырăн йышăнать.

Эпĕ Халăх çутĕçĕнче 1895 çулта ĕçлеме пуçланă та çак ĕçе татти-сыпписĕр туса пынă. 1900 çулччен эпĕ Хусанти тĕп крешĕн-тутар шкулĕнче вĕрентнĕ, çав çултан пуçласа 1918 çулччен, Хусанти учитель семинарине хупса лартиччен, унта вĕрентекен ĕçне туса пынă. 1917 çулта мана Çурçĕр-хĕвелтухăç археологипе этнографи институтне чăваш тата тутар чĕлхисене вĕрентме чĕнсе илчĕç. Институт Канашĕ 1919 çулхи авăн уйăхĕн 5-мĕшĕнче мана тĕрĕк чĕлхисен кафедри профессорне суйларĕ /çав вăхăтрах Хусан университетĕнче те вĕрентеттĕм/. Йывăртан та йывăр выçлăх çулсенче Чĕмпĕре /Ульяновска/ ĕçлеме куçрăм. Унта Чăваш халăх çутĕç институчĕн профессорĕнче 1923 çулччен, урăхла каласан, мĕн института хупиччченех ĕçлерĕм. Унтан мана Азерб. патш. университетне тĕрĕк чĕлхе пĕлĕвĕн профессорĕ пулса ĕçлеме чĕнсе илчĕç. Çав университет Канашĕ /1925 çулхи кĕçĕн кăрлачăн 3-мĕшĕнче пулнă ларура/, Хĕвелтухăç факультечĕ сĕннипе, мана тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн /honoris causae/ тĕрĕк чĕлхе пĕлĕвĕн докторĕ ятне пачĕ. Кун пирки Ленинград тюркологĕсем манăн ăслăлăх ĕçĕ-хĕлĕ çинчен ятарласа Хаклав çырса пачĕç, унсăр пуçне Б.Мункачи, Рамстедт, Готье, Ю.Мессарош, Ю.Вихман, М.Рясянен т. ыт. хăйсен пичетленнĕ ĕçĕсенче каланисене шута илчĕç.

Хальхи вăхăтра эпĕ Хусанти хĕвелтухăç педагогика институтĕнче тĕрĕк чĕлхе пĕлĕвĕн профессорĕнче ĕçлетĕп. Кил-йышăмра - сакăр /8/ ача тата арăм. Пĕтĕм кил-йыш эпĕ ĕçлесе тупнă укçапа кăна йӳнеçсе пурăнать, мĕншĕн тесен ачамсем /вĕсенчен хăшĕ-пĕри питĕ пĕчĕк/ е шкулта вĕренеççĕ, е шкула та çӳреймеççĕ-ха.

Юлашки вăхăтра /пилĕк е ултă çул ĕнтĕ/ чĕре чирĕпе аптăратăп, çавăнпа та ĕçлеме йывăрлансах пырать.

**Н.АШМАРИН профессор.**

Хусан, 1927 çулхи ака уйăхĕн 27-мĕшĕ.

[1] Документсенче эпĕ 1870 çулхи авăн уйăхĕн 22-мĕшĕнче çуралнă тесе кăтартнă, анчах ку йăнăш пулмалла, ăна чиркӳ кĕнекисем тăрăх тӳрлетмелле.

[2] Чăваш сăмахĕсемпе пуплерĕшĕсене эпĕ пуçласа хамăн кукамайран илтсеччĕ, вăл чăвашсене питĕ хисеплетчĕ. Унăн кăмăл-сипечĕ мана питĕ пысăк витĕм кӳнине асăрхатăп.

[3] Ăна малтанах В.А.Белилин йĕркеленĕ пулнă.